26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
АВГУСТ
10
ЫТЛАРИКУН
159(6396) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Кĕраккине кăтартуллăн туса иртерер!

Кĕраккине тухма вăхăт çитрĕ. Елчĕк, Вăрнар, Чкаловски, Вăрмар тата ытти районсенчи малта пыракан колхозсем кĕраккине тухрĕç. Колхозсен уйхирисенче халĕ уборка ĕçĕсем пĕтĕм анлăшне, хĕрӳллĕн пулса пыраççĕ. Колхоз председателĕсемпе бригадирсен, районсенчи партипе совет тата комсомол организацисен руководителĕсен колхозсене уборка ĕçĕсене кĕраккине ăнăçлăн туса ирттерессипе тĕрĕс çыхăнтарса пымалла. 1944 çулта вăйлă тырпул илмелли никĕсе вăхăтне [illegible] хывмалла.

ЧАССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ «1943 çулта Чăваш АССР-ĕнчи колхозсемпе совхозсенче кĕрхи тырă акасси çинчен» июль уйăхĕнче йышăннă постановленипе пур колхозсене те, пур руководительсене те çак ответлă ĕçе ăнăçлăн туса ирттерес тĕлĕшпе çирĕп кăтартусем пачĕ.

Кĕраки тума пирĕн республикăн колхозсенче кăçал, августăн 10-мĕшĕнче тухмалла, августăн 24-мĕшĕ тĕлне кĕрхи тырăсене пĕтĕмĕшпех акса пĕтермелле. Кĕраккине çак срокра туса ирттернине, урăхла каласан, ĕçе агротехника срокĕнче туса ирттернине кĕрхи тырăсем 1944 çулта пулăхлă пуласси [illegible] тăрать.

Совнаркомпа ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ йышăннă постановлени пурнăçа кĕртсе пырса, Красноармейски районри «Янмурзино» колхоз кĕраккине августăн 8-мĕшĕнче организациленĕ тухнă. Колхоз кĕрхи тырă кăçал 198 гектар акать, пĕтĕм çĕр лаптăкĕсене сеялкăсемпе акма шутлать. Хĕрсе тырă вырнă, авăн çапнă, государствăна тырă леçнĕ ĕçсемпе пĕрлех ку колхоз кĕрхи тырăсем акма çĕр хатĕрленĕ ĕçре те малта пырать. Колхоз кĕрхи тырăсем [illegible]. Ишмер лапма 20 колхозник 4—5 кун хушши пысăк тимлĕхпе туса турĕç. Сеялкăсене юсаса, акмалли вăрăсене ларса та илсе тухнă. Сеялкăсемпе акакансене уйăрса çирĕплетнĕ. Еç кунран вĕçленсе пырать.

Етĕрне районĕнчи Киров ячĕпе тăракан колхоз кĕраккине паян тухрĕ. Колхоз пысăк тухăçлă тырпулшăн çулран çул вăйларах та вăйларах кĕрешет. Иртнĕ 1942 çулта Киров ячĕпе тăракан колхоз гектартан вăтам шутпа 16,5 центнер тырпул тухса илнĕ. Кăçал кĕрхи тырăсем тата тухăçларах пулчĕç. Малтан шутласа илнĕ тăрăх, тырă гектартан вăтам шутпа 17 центнертан кая мар тухнă. [illegible]

Вăрнар районĕнчи Уравшри «Малайăн 1-мĕшĕ» колхоз кăçал çĕрсене [illegible]

Вăрлăхлăх сортлă тырă акмалли вăрлăхсене халех уйăрса илмелле. Вăрлăх участокĕ—çĕртме пуссинче чи лайăх, çемçе участок пултăр; агротехникăлла мероприятисене тĕрĕс те пурнăçа кĕртсе, унта тырра обязательнăй йĕркепе сеялкăсемпе акас пулать. Акнă хыççăнах вăрлăх участокĕсен чиккисене шучĕсем лартмалла.

Лашасене упăштарса ĕçлес, машинăсене пĕр чарăнмасăр ĕçлеттерес опытпа пирĕн республикăри колхозсен кĕраккине тухма [illegible]

Кĕраккине кĕске срокра пысăк пахалăхпа туса ирттерер!

Совет Информаци Бюровĕнчен

АВГУСТĂН 7-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Августăн 7-мĕшĕнче БРЯНСК енче пирĕн войскăсем çаплах малалла тапăнса пынă, 10 километртан пуçласа 12 километра çити малалла куçса, халăх пурăнакан 100 пункта ытла, вăл шутра ПАРАМОНОВО, ЮШКОВО, КРАСНЫЙ, ШАМОРДИНО (Орелран 16 километр хĕвеланăçнерехре), ЛЕДНА, БЕЛОКОЛОДЕЦ, СЕБЯКИНО, АПАЛЬКИНО, ГНЕЗДИЛОВО (Кромыран 23 километр кăнтăр-хĕвеланăçнерехре, ДОЛЖЕНСКИ ятлă пунктсене тата САХАНСКАЯ чугунçул станцине (Орелран 8 километр кăнтăр-хĕвеланăçнерехре) йышăнса илнĕ.

ХАРЬКОВ енче пирĕн войскăсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе, çаплах ăнăçлăн малалла тапăнса пынă, 10 километртан пуçласа 15 километра çити малалла куçса, халăх пурăнакан 70 пункта ытла, вăл шутра ГРАЙВОРОН хулине, БОРИСОВКА район центрне, халăх пурăнакан пысăк пунктсене—МЕЗЕНЕВКА, ДОРОГОЩ, КОЗИНКА, СЕННОЕ, МАЛАЯ ПИСАРЕВКА, УДЫ, МИКОЯНОВКА, ЕРОДОК, ПУЛЯЕВКА ятлă пунктсене тата ДОЛБИНО, ТОЛОКОННОЕ чугунçул станцийĕсене йышăнса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче пирĕн войскăсем малтанхи позицисенчех тăнă, разведка тунă тата тăшмана хирĕç артиллерипе минометсенчен персе тăнă.

Августăн 6-мĕшĕнче мĕнпур фронтсенче пирĕн войскăсем нимĕçсен 43 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллерирен персе, тăшманăн 80 самолетне ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Брянск енче пирĕн войскăсем çаплах малалла тапăнса пынă.

Орелран хĕвеланăçнерехре совет чăçĕсем, малалла куçса, халăх пурăнакан чылай пунктсене ирĕке кăларнă. Нимĕçсем, пирĕн войскăсем малалла тапăнса пынине чарса лартма хăтланса, халăх пурăнакан пунктсем патне пымалли вырăнсене, çулсем çине минăсем лартса тухаççĕ, кашни усăллă высота çинче чарăнса тăма хăтланаççĕ. Тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе, пирĕн войскăсем нимĕçсене çынсем тĕлĕшпе те, техника енĕпе те йывăр çухатусем кӳресçĕ. Пĕр чăçри боецсем нимĕçсене çирĕплетнĕ позицисенчен çапса кăларнă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 600 вилли выртса юлнă. 2 артиллери батарейине, боеприпассен складне тата ытти трофейăсем тытса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн боецсем тăшманăн тĕреклетнĕ пунктне атакăланă, çав пунктри нимĕç пехотин батальонне пĕтĕмпех пĕтерсе тăкнă.

Совет войскисем Кромы хулине йышăнса илнĕ хыççăн çаплах малалла тапăнса пынă, халăх пурăнакан 20 пункта ытла ирĕке кăларнă. Пĕр соединенин боецĕсем юханшыв урлă каçнă та тăшманăн вăйлă çирĕплетнĕ позицийĕсене тытса илнĕ. Кун каçичченхи çапăçусенче пирĕн чăçсем нимĕçсен 1000 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. 7 танк, 6 оруди, снаряд шаршанĕсем нумай тата минăсемпе патронсем питĕ нумай тытса илнĕ. Провод юлташ командир пулса тăракан чăçри подразделенисем юлашки кунсенче нимĕçсен 30 контратакине ытла сирсе янă, тăшманăн 2000 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Пирĕн боецсемпе командирсем паттăрлăхпа геройлăх тĕслĕхĕсем кăтартаççĕ. Дросков лейтенантпа 16 красноармеец тăшман тылне тухнă та нимĕçсене кĕтмен çĕртен атакăланă. 40 гитлеровеца вĕлернĕ, ыттисем, хĕçпăшалĕсене пăрахса, тарса пĕтнĕ. Дросков лейтенантпа унăн боецĕсем нимĕçсен обер-лейтенантне тыткăна илнĕ, 2 оруди, 16 пулемет, 2 миномет, винтовкăсемпе автоматсем нумай тытса илнĕ. Гавченко капитан ертсе пыракан автоматчиксен ушкăнĕ нимĕç батальонĕн штабне тапăннă. Штаба аркатса тăкса, пирĕн боецсем темиçе гитлеровеца тыткăна илнĕ, 3 радиостанци тата документсем тытса илнĕ.

Харьков енче пирĕн войскăсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе, çаплах ăнăçлăн малалла тапăнса пынă. Пĕр соединени чăçĕсем, нимĕçсен оборонине татса, тăшманăн темиçе гарнизонне çавăрса илнĕ те нимĕçсене çак ункăран ниçталла та тухма паман. Çав соединени хыççăн пыракан войскăсем тăшман гарнизонĕсене пĕтере-пĕтере тăкаççĕ. Çапла, пирĕн чăçсем Бор[illegible]ăра нимĕç войскисен чылай йышла ушкăнне çавăрса илнĕ те хаяр çапăçура ăна пĕтерсе лартнă.

Татăклăн штурмласа, Грайворон хулине тата халăх пурăнакан ытти чылай пунктсене тытса, илнĕ. Пĕр танковăй часть тăшман пехотин колоннине атакăланă та 800 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсен 19 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. 150 гитлеровеца тыткăна илнĕ. 16 оруди, 85 пулемет, 60 автомашина тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ.

* * *

Донбасра, Ворошиловградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехри районра, пирĕн чăçсем çапăçса разведка тунă. Совет авиацийĕ танксен, автомашинăсен колоннисене тата тăшманăн чугунçул составĕсене пыра-пыра çапнă. Пĕр станцире чугунçул çинчи виçĕ состава, вăл шутра 30 бензоцистернăна, çунтарса янă. Тепĕр станцире бомбăсем тӳрремĕнех пырса тивнипе чугунçул çинчи 14 эшелона вут хыпса илнĕ. Разведка палăртнă тăрăх, эшелонсем пурте çунса кайнă.

* * *

Брест облаçĕнче кĕрешекен партизансен 4 отрячĕ июль уйăхĕнче нимĕçсен чугунçулпа войскăсем тата çар техники илсе пыракан 16 эшелонне ӳпĕнтерсе янă. 16 паровоз, 68 платформа тата 59 вагон çĕмĕрĕлнĕ. Разведчик-партизансем çакна палăртнă: çав крушенисенче 600 гитлеровец ытла вилнĕ е аманнă. Барановичи облаçĕнче кĕрешекен отрядри партизансен ушкăнĕ июлĕн 27-мĕшĕнче, минăсем лартса, тăшманăн танксем, хăй тĕллĕн çӳрекен орудисем тата зенитнăй орудисем илсе пынă эшелонне сирпĕнтерсе янă. Чугунçулăн çак участокĕнче темиçе талăк хушши поездсем çӳресси чарăнса ларнă.

* * *

Августăн 5-мĕшĕнчен пуçласа, урăхла каласан, совет войскисем нимĕçсене Орелран хĕссе кăларнă хыççăн, гитлеровецсем фронтсенчи лару-тăру çинчен калакан хыпарсене хăйсен юлашки ăс-тăнне çухатса пĕлтереççĕ. Берлинри радио кунран кунах, хăш чухне кун каçа темиçе хутчен те, пĕри тепринчен ухмахларах хыпарсене пĕлтерет. Çапла, сăмахран илсен, августăн 6-мĕшĕнче нимĕç радиовĕ çапла пĕлтернĕ: «Орел патĕнче тыткăна илнĕ вырăссен йышне ĕнтĕ чăнласах шутласа кăларма та çук, вăл 300.000 çынран та иртсе каять», тенĕ. Çавăн пек ухмахла хăтланса, Гитлер ставки нимĕç çарĕн Орел районĕнчи йывăр поражененине нимĕçсен çитĕнĕвĕ пек туса кăтартасшăн. Анчах та хальхи фашистла Германие çавăн пек ăсран тухса ӳкнĕ гитлеровецсем туртса кăларнă çав тери ухмах сăмахсене ĕненекен айвансем сахал тупăнаççĕ ĕнтĕ. Чăнах та, Хĕрлĕ Çар пыра-пыра çапнипе нимĕç войскисем каялла чакаççĕ, питĕ пысăк çухатусем тӳсеççĕ. Аркатса, çĕмĕрсе тăкнă нимĕç дивизийĕсем çĕршер пин мар, пĕр çĕрс яхăн та пулин тыткăна илни пулма пултарать-и-ха вăл? Каялла чакакан гитлеровецсене хăйсен урисене чипер илсе тарсан та çитĕччĕ, ăста ĕнтĕ унта вĕсем кама та пулин тыткăна илесси.

Гитлеровецсем хăйсене хăйсем тахçанах ĕнтĕ тĕнчери чи вăйлă суеçĕсем пулса тăнине кăтартрĕç, вĕсенчен ку тĕлĕшпе никам та иртсе каяймасть, анчах та вĕсем ку хутра хăйсенчен те ирттерсе янă, хăйсене пĕтĕм тĕнче кулăшĕ пулма кăларса тăратрĕç.

* * *

Германи информаци бюровĕ Орела панине йышăннă. Ку хулана нимĕçсем чи юлашки вăхăтченех хăйсен оборонин никам илме пултарайман крепоçĕ тесе шутласа тăнă. Халĕ гитлеровецсем хăйсем хуларан тухса каяс умĕн тунă ишĕлтерӳсем çинчен урса кайса, çиллене сыраççĕ: «Совет войскисем никам пурăнман пушă хулана йышăнса илчĕç». «Хулана пĕтĕмпех ишсе пĕтернĕ». «Орелра большевиксем пĕр фабрика та, пĕр завод та тупаймĕç. Пурăнмалли çуртсем çивиттисĕр лараççĕ».

Ку сăмахсене гитлерла сыхçисем хăйсемех çырса пĕлтерчĕç. Урса кайнă тискер кайăксем ку хутра хăйсем тунă преступленисене пытарма та хăтланмаççĕ, вĕсем ку хутра хăйсен преступленийĕсене халăха кăтартма кăларса тăратаççĕ. Пĕр нимĕçсене кăна тивекен сĕмсĕрлĕхпе вĕсем пĕтĕм тĕнче умĕнче: эпир совтсен пысăк, хитре хулине ишсе антартăмăр,—тесе мухтанаççĕ. Чурасемпе сутă тăвакан фашистсем Орел хулинчи халăха нумайĕшне, хĕрарăмсемпе ачасене те, вăйпа хăвалаласа илсе кайнă, совет гражданĕсене пинĕ-пинĕпе вĕлернĕ. Нимĕç ирсĕрĕсем акă мĕнпе мухтанаççĕ: вĕсем Орелра промышленность предприятийĕсене кăна мар, пурăнмалли çуртсене те пĕтерсе тăкнă вĕт.

Фашистла бандитсемпе палачсем çакна пĕлсе тăччăр: вĕсем тунă преступленисене пĕрне те манмаççĕ. Вĕсен мĕнпур усал ĕçсемшĕн ответ тытмалла пулать. Совет халăхĕ Орел хулине тĕп тума тăрăшнă вăрă-хурахсене хаяррăн айăпласа тавăрĕ, вĕсемпе пĕрлех совет халăхĕ нимĕç çарĕн бандитла ĕçĕсене намăса пĕлмесĕр ырласа мухтакан гитлерла шайкăри вăрă-хурахсене те тивĕçлипе айăпласа тавăрĕ.

АВГУСТĂН 8-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКĂРАН

Августăн 8-мĕшĕнче БРЯНСК енче пирĕн войскăсем çаплах малалла тапăнса пынă, 6 километртан пуçласа 12 километра çити ытла малалла куçса, халăх пурăнакан 130 пункта ытла, вăл шутра НАРЫШКИНО район центрĕпе чугунçул станцине (Орелран 20 километр хĕвеланăçнерехре), БЕДНОТЫ чугунçул станцине (Орелран 28 километр хĕвеланăçнерехре), халăх пурăнакан пысăк пунктсене — КЛЕМЕНОВО, МОЩЕНОЕ, КРАСНЫЕ РЯВИНКИ, БАБИКОВА, ЛЕБЕДКА, ВОРОБЬЕВКА, АЛМАЗОВО, ХМЕЛЕВАЯ (Кромыран 19 километр çурçĕр-хĕвеланăçнерехре), ВЕРХНЯЯ БОЕВКА ятлă пунктсене йышăнса илнĕ.

ХАРЬКОВ енче пирĕн войскăсем ăнăçлăн малалла тапăнса пынă, 12 километртан пуçласа 15 километра çити малалла куçса, халăх пурăнакан 60 пункта ытла, вăл шутра БОГОДУХОВ хулине, КРАСНОПЕРЬЕ район центрĕпе чугунçул станцине, БОЛЬШАЯ ПИСАРЕВКА район центрне тата халăх пурăнакан пысăк пунктсене—ЖИГАЙЛОВКА, ТАРАСОВКА, ЯМНОЕ, КУПЬЕВАХА, КРЫСИНО, ДОЛЖИК (Харковран 26 километр çурçĕр-хĕвеланăçнерехре), ПЕТРОВКА, ЧЕРЕМОШНОЕ ятлă пунктсене йышăнса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче пирĕн войскăсем разведка тунă тата тăшмана хирĕç артиллерипе минометсенчен персе тăнă.

Августăн 7-мĕшĕнче мĕнпур фронтсенче пирĕн войскăсем нимĕçсен 77 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă, унсăр пуçне тата Харьков енче пирĕн войскăсем тăшманран пĕтĕмĕшпех юсавлă 48 танк, вăл шутра «тигр» йышши 15 танк тытса илнĕ. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллерирен персе, мĕнпур фронтсенче тăшманăн 125 самолетне ӳкернĕ.

Пирĕн авиаци Харьков, Брянск чугунçул узелĕсене тата Мга станцине тапăнни

Августăн 7-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн авиаци Харьков тата 1-мĕш Брянскпа 2-мĕш Брянск чугунçул узелĕсенче тăнă тăшманăн çар эшелонĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем тӳрремĕнех пырса тивнипе чугунçул çинчи темиçе состав çĕмĕрĕлсе кайнă. 30 пушар таран тухнă. Пушарсенче нумайĕшĕнче вăйлă взрывсем пулнă.

Тата çавăн пекех пирĕн авиаци Мга станцийĕ çине, тăшманăн çав станци çывăхĕнчи склачĕсем çине тата артиллери позицийĕсем çине бомбăсем вăйлăн пăрахнă.

Пирĕн самолетсем пурте хăйсен базисене таврăннă.

Пирĕн авиаци Карачев, Люботин, Мерефа, Основа чугунçул станцийĕсене тата тăшманăн аэродромĕсене тапăнни

Августăн 8-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн авиаци Карачев, Люботин, Мерефа тата Основа чугунçул станцийĕсене тапăннă. Тăшманăн войскăсемпе техника илсе пыракан эшелонĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Пушарсем тухнă. Пушарсенче нумайĕшĕнче вăйлă взрывсем пулнă.

Çав каçах пирĕн авиаци нимĕç самолечĕсем пĕр вырăна пуçтарăнса тăнă аэродромсем çине бомбăсем пăрахнă. Тăшманăн чылай самолечĕсене пĕтерсе тăкнă тата сиенленĕ.

Боевой заданирен пирĕн пĕр самолет каялла таврăнман.

Комбайнерсемпе комбайнеркăсем! Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнăр, комбайнсене тухăçлăн ĕçлеттерĕр!

Колхоз уйхирĕсенчи çĕкленӳ

ВАРМАР. Августăн 9-мĕшĕ. (Телефонпа). Верховный Главнокомандующин приказĕ районри колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче производствăллă çĕнĕ çĕкленӳ пуçарчĕ.

«Парижская Коммуна» колхоз ыраша кĕске срокра вырса пуçтарчĕ. Халĕ 211 гектар çинчи кĕлтесене кӳрсе капана хывнă. Ыран-паянах кĕлтесене капана хывса тата сĕлĕ вырса пĕтереççĕ. О. Чернова, М. Мефодьева, А. Иванова колхозницăсем кашни кун çурлапа 0,18—0,20-шер гектар выраççĕ.

Çавăн пекех «Красная Кубня» колхоз та ыраша 5 кун хушшинче вырса пĕтерчĕ. Колхоз çак кунсенчех сĕлĕ вырса пĕтерет. Уйрăмăнах Ж. Сниткина, А. Чернова колхозницăсем лайăх тĕслĕхсем кăтартса ĕçлеççĕ. Вĕсем кулленех 0,25-шер гектар выраççĕ.

Районри ĕççыннисен хальхи шухăш-кăмăлĕ аслă уяв чухнехи пек. Çулпуçăн приказне пур çĕрте те пысăк çĕкленӳпе сӳтсе-яваççĕ.

— Пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çар нимĕçсене каллех тепĕр хут вăйлăн пырса çапрĕ. Орелпа Белгород хулисене нимĕç пусмăрĕнчен ирĕке кăларнă совет воинĕсене чыс та мухтав! Хамăрăн геройла войскăсене Брянск, Харьков тата советăн ытти мĕнпур хулисене ирĕке кăларма колхоз уйхирĕсенче çине тăрса ĕçленипе пулăшăр!—çакăн пек районри ĕççыннисен шухăш-кăмăлĕ.

М. ЗАЙЦЕВ.

Кунта паха тырра тăккалаççĕ

ШАХАСАН, августăн 9-мĕшĕ. (Хамăр корр., телефонпа). «Активист» колхоз ыраш вырса пуçтарса, виçĕ кун ĕнтĕ çуртырри вырать. Паянхи кун тĕлне çуртыррисем пĕтĕмпе 37 гектар вырнă. Хирте кулленех икĕ жнейка 16—18-шар сехетрен кая мар ĕçлет. Машиноведсем пулса—колхоз председателĕ Тимофеевпа колхозник Михайлов юлташсем ĕçлеççĕ. Вĕсем 6-шар гектар выраççĕ. Çыхакансем кулленех 570—600-шер кĕлте çыхаççĕ. Алăпа выракансем те нормăна ирттерсе тултарса пыраççĕ.

Çапла, ĕç кунта кал-кал пырать темелле. Анчах колхоз руководителĕпе бригадирсем ĕçĕн пахалăхĕ çине çителĕксĕр çавăрăнса пăхаççĕ. 10 гектар сĕлĕ вырнă çĕрте кашни тăваткăл метр çинче 20 пучах, 8 гектар тулă вырнă çĕрте кашни тăваткăл метр çинче 12 пучах тăккаласа хăварнă. Тырпул уйрăмах машинăсем хыççăн тăккаланса юлать. Жнейкăсем çумне зерноуловительсем лартман. Машиноведсем зерноуловительсене мĕнле майлаштарса лартмаллине те пĕлмеççĕ. Зерноуловитель лартсан, жнейка тырра лайăх çавăрса пăрахаймасть, теççĕ вĕсем. Колхозра кĕреплĕллĕ çавасем çителĕклĕ таранах туса хатĕрленĕ, анчах вĕсемпе пĕрре те усă курмаççĕ.

Колхоз счетовочĕ Тимофеев юлташ икĕ бригадăра агитатор пулса тăрать. Анчах вăл тырă вырма пуçланăранпа хире тухса курман. Колхозниксем—пĕр эрне ĕнтĕ фронтри лару-тăру çинчен нимĕн те пĕлместпĕр, тесе ӳпкелешеççĕ. Хаçатсем пире пухусенче кăна вуласа параççĕ, урăх çĕрте хаçат курма çук, теççĕ вĕсем.

Эпир колхозниксене Хĕрлĕ Çар Орелпа Белгород хулисене илсе, Хĕвеланăçнелле малалла куçса пыни çинчен, Верховный Главнокомандующи Сталин юлташ пирĕн паттăр войскăсене тав туса приказ пани çинчен каласа патăмăр. Колхозниксем çав хыпарсене питех те хавхаланса, тимлĕн итлерĕç. Вĕсем татах та хастарлăнрах ĕçлеме пулчĕç.

Колхозра авăн çапас ĕç хĕрсех пырать. Молотилка патĕнчен тырра тӳрех государствăна леçсе параççĕ. Паянхи куна пĕтĕмпе хатĕрлев пунктне 45 центнер тырă леçсе панă.

В. ВЕСЕЛОВ.

ЧАВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ КОЛХОЗСЕН УЙХИРЕСЕНЧЕ ХĔРӲ ĔÇ ПЫРАТЬ. Ӳкерчĕк çинче: Ишлей районĕнчи «Коммуна» колхозри ударницăсем Е. П. Новиковăпа Т. Т. Владимирова юлташсем ыраш выраççĕ.

Н. ДАНИЛОВ фотоӳкерчĕкĕ.

ЫРАШ ВЫРСА ПЕТЕРНĔ

КАНАШ. (Хамăр корр., телефонпа). Асхвари «Красное пламя» колхозăн пур бригадисем те ыраш вырса пĕтерчĕç. Августăн 7-мĕшĕнче çуртырри вырма пуçларĕç. Кашни бригадăрах Сталин юлташăн Хĕрлĕ Çар воинĕсене Белгородпа Орел хулисене ирĕке кăларнă ятпа панă приказне ăнлантарса панă. Çулпуç приказĕ колхозниксене ĕçтухăçне тата ытларах ӳстерме хастарлăх хушса пачĕ. Ульяна Михайлова, М. Актистова, А. Петров машиноведсем 6-шар гектар тырă вырчĕç. Колхоз пĕр кун хушшинче 12 гектар пăри, 11 гектар хуратул, 9 гектар сĕлĕ вырчĕ.

Çав вăхăтрах авăн çапаççĕ, кĕлте турттараççĕ. Колхоз государствăна тырă парас енĕпе графика тултарса пырать. Августăн 5-мĕшĕ тĕлне 133 центнер леçсе панă. Августăн 7-мĕшĕнче 20 лавлă хĕрлĕ обозпа кайса леçнĕ. План тăрăх августăн 15-мĕшĕ тĕлне çуртыррисене вырса пĕтерме палăртнă. Уйри тырпула пухса кĕртес ĕçе тивĕçлипе организациленĕшĕн колхоза районри куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялава панă.

Тырă вырса пĕтерчĕç

КУСЛАВККА, августăн 9-мĕшĕ. (Телефонпа). Районра 38 колхоз кĕрхи тырăсене вырса пĕтерчĕ. «Путь Маркса» колхозăн 1-мĕш бригади ĕнер кĕрхи тата çурхи тырăсене пурне те вырса пĕтерчĕ. Ыран колхоз тырă вырса пĕтерет. Сталин юлташăн приказĕпе хавхаланнă колхозниксем ĕçре çĕнĕ ӳсĕмсем тăваççĕ. «Правда» колхозра М. Сотникова, К. Мамонтова колхозницăсем ĕç нормине кулленех 250 процент тултараççĕ, «13 лет Октября» колхоз членĕ А. Филиппова юлташ кулленех виçĕ норма чухлĕ вырать.

А. ШАРКОВ.

Хирти ĕçе кашни çыннах хутшăнтарнă

ЭЛĔК. (Хамăр корр.). Хочашри «Новый путь» колхозра Сталин юлташ приказне итлесе ăнланнă хыççăн уборка чылай хăвăртланчĕ. Колхозниксем, çулпуç приказне ĕç тухăçлăхне ӳстернипе ответлес тесе, кунне-çĕрне пĕлмесĕр ĕçлеççĕ. Мĕнпур халăх пĕтĕмĕшпех уйра ĕçлет. Кĕрхи тырăсене вырса пуçтарчĕç, халĕ çурхи тырăсене ăнăçлăн вырса пухассишĕн кĕрешӳ пырать.

Коммунист А. Захаров, колхоз счетовочĕ И. Скворцов, учительница А. Семенова, каникула килнĕ студентка Д. Семенова юлташсем ялта—агитаторсем. Вĕсем агитацилĕ-ăнлантарулла ĕçе аван организациленĕ. Çакăнпа пĕрлех вĕсем колхозниксемпе пĕрле куллен ывăнма пĕлмесĕр тырă выраççĕ. Кунне 0,15—0,16-шар гектар вырса, ыттисене пример кăтартаççĕ.

Уборка ĕçĕсене колхоз ялти кашни çынна активлăн хутшăнтарать. Эвакуаци йĕркипе килнĕ çынсем кăçал уборкăра паха тĕслĕхсем кăтартрĕç. В. Мясцова, Т. Кубанова юлташсем, акă, çурлапа куллен 0,15-шер гектар тырă выраççĕ.

Х. ЛИСИН.

Агитациллĕ-массăллă ĕç тулашĕнче пĕр колхозник те ан юлтăр!

Сталин юлташăн кăçалхи майăн пĕрремĕшĕнчи приказне пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешсе, орденлă Чăваш республикинчи ĕççыннисем вăрçăн йывăр условийĕсенче тухăçлă тырпул пăхса çитĕнтерчĕç, обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе çĕнĕ çĕнтерӳсем турĕç.

ССР Союзĕн Наркомземĕ, Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвăн малтанхи итогĕсене пăхса тухса, пирĕн республикăна кăçал пысăк тухăçлă тырпулшăн кĕрешес енĕпе те, колхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе малалла вăйлатассишĕн кĕрешес енĕпе те Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илмелли кандидат тесе йышăнчĕ. Çавăн пекех ВЦСПС-па ССР Союзĕн Наркомземĕ республикăри машинно-тракторнăй станцисем çуракинче тракторпа тумалли ĕçсен планне ăнăçлăн тултарнине те палăртрĕç.

Çак хыпар республикăри ĕççыннисене савăнтарчĕ, колхозниксемпе колхозницăсене тырпулсене уйхиртен пухса кĕртес ĕçре тата лайăхрах ĕçлеме çĕнĕ вăй-хал хушса пачĕ. Пирĕн çĕршер пултаруллă агитаторсем çак çитĕнӳсем çинчен колхозниксене тĕплĕн ăнлантарса пачĕç, вĕсене ăмăртăва малалла та вăйлатса пыма кĕрешĕве çĕклерĕç.

Пирĕн республикăра халĕ Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавĕ вĕлкĕшсе тăрать. Ăна пире выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе иртнĕ çул тунă ĕçсемшĕн панă. Ку ялава пирĕн кăçал та хамăр алăрах хăварассишĕн тата тырпул тухăçлăхне ӳстерес енĕпе те Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илме тивĕçлĕ пулассишĕн кĕрешмелле. Агитаторсен çакăн çинчен колхозниксемпе колхозницăсене, комбайнерсемпе трактористсене тĕплĕн ăнлантарса парас пулать.

Çак кĕрешĕвĕн ăнăçлăхне шăпах хальхи хĕрӳллĕ тапхăр—тырпулсене кĕске срокра тата тăккаламасăр пухса кĕртни, государство умĕнчи обязательствăсене вăхăтра пурнăçлани татса параççĕ.

Республикăри колхозниксемпе колхозницăсем, комбайнерсемпе трактористсем халĕ вăйлă тырпула пуçтарса кĕртессишĕн мĕнпур вăя хурса кĕрешеççĕ. Çĕршер агитаторсем вĕсене ĕçре хавхалантарса, ертсе пыраççĕ.

Нумай колхозсенче агитациллĕ-массăллă ĕçе витĕмлĕн туса пыраççĕ. Красноармейски районри «Янмурзино» колхозри коммунистсемпе комсомолецсем тата учительсем агитаци ĕçĕнче чылай çитĕнӳсем турĕç. Вĕсем хаçатсен витринисем тунă. Колхозри стена хаçатне йĕркеллĕ кăларса тăраççĕ. Коммунистсемпе комсомолецсем хăйсем производствăра активлăн хутшăнса ĕçлеççĕ. Колхозниксемпе пĕрле ĕçлесе, вĕсем Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсене, союзниксен Сицилири войскисен ĕçĕсене, партипе правительствăн çĕнĕ постановленийĕсене яланах вăхăтра ăнлантарса параççĕ. Нумай пулмасть СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «1943 çулта тырпулсене пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановлени хаçатсем çинче пичетленсе тухрĕ. «Янмурзино» колхозри агитатор-коммунистсем С. Ильин, Александров, Ефремов, Гурьева юлташсем постановленипе хăйсем тĕплĕн паллашнă хыççăн бригадăсене кайрĕç. Çĕнĕ постановлени çинчен колхозниксене тĕплĕн каласа пачĕç, ун хыççăн колхозниксем хастарлăнрах ĕçлеме тытăнчĕç. Колхозра пур машинăсене те тырă вырма кăларнă, колхозниксем ватти-вĕтти мĕнĕпех уйра тырă выраççĕ. Нумай колхозниксем нормăсене ытлашшипех тултараççĕ. Краснова, Ильина, Димитриев юлташсем ик-виçĕ çыншăн ĕçлеççĕ.

Нумай агитаторсем агитаци ĕçĕнче тĕрлĕ формăсемпе усă кураççĕ. Кушар ялсоветĕнчи вулав çурчĕн заведующийĕ учительница Ф. Тимофеева юлташ стена хаçачĕсене йĕркеллĕ кăларса тăрать. Вăл çак кунсенче икĕ номер «Çăлтăр» ятлă стена хаçачĕ кăларчĕ. Хаçатăн 5-мĕш номерĕ уйрăмах паха. Унта тырă вырас ĕçре кĕреплеллĕ çавасемпе, жнейкăсемпе, лобогрейкăсемпе малтанхи кунран пуçласах усă курма тытăнасси çинчен витĕмлĕн агитацилени. Хаçат фронтовиксен çырăвĕсене йĕркеллĕ пичетлесе тăрать, колхозниксене хирте фронтовиксен примерĕпе ĕçлеме чĕнет.

«Çăлтăр» хаçатăн 6-мĕш номерĕнче «Фронтри боецсем пек хастарлăн ĕçлер» ятлă статьяра фронтовик-орденоносец Масловăн кĕрешӳри ĕçне кăтартса панă. Хаçат колхозниксене Кушар ялĕнчен фронта кайнă Маслов пек паттăррăн ĕçлеме чĕннĕ.

Агитаторăн кулленхи çивĕч ыйтусене колхозниксене вăхăтра ăнлантарса памалла. Кахалсемпе ĕçре чăрмантаракансене тăрă шыв çине кăлармалла. Кашни колхозник ĕçе ир тухса каçчен ĕçлесси—агитатортан нумай килет. Агитаторăн ĕçри йывăрлăхсене пытарас пулмасть, колхозниксене çав йывăрлăхсене çĕнтерме вĕрентмелле. Колхозра ĕçе чăрмантарса пыракан кахалсем пирки ыйтăва уйрăмах çивĕччĕн лартас пулать.

Агитаторсен аллинче Сталин юлташăн вăрçă вăхăтĕнчи историллĕ выступленийĕсем, писательсемпе фронтовиксен интереслĕ кĕнекисем пур. Кашни агитатор вĕсемпе анлăн усă курма тивĕçлĕ.

Анчах, ал айĕнче пуян та чаплă материалсем пур пулин те, хăшпĕр çĕрте агитаторсем вĕсемпе кирлĕ пек усă курмаççĕ. Упири (Красноармейски район) «Коминтерн» колхозри пĕрремĕшпе иккĕмĕш бригадăсенче дисциплина çителĕксĕр вырăнта тăрать. Колхозниксем ĕçе ир тухмаççĕ е тата теприсем — Анастасия Димитриева, Анастасия Васильева пеккисем—ирхине ĕçе тухса ятне тăваççĕ те кăнтăрлачченех киле тарса кĕреççĕ, ĕç пĕтес умĕн, каç пултипе, каллех ĕçе тухаççĕ. Мĕн калăн? «Ячĕ пултăр, тухман тесе ан калаччăр»—тесе шутлаççĕ пулмалла вĕсем. Çакна колхозри коммунистсемпе комсомолецсем аван пĕлсе тăраççĕ. Анчах та ĕç дисциплинине çирĕплетесси, агитациллĕ-массăллă ĕçсене пĕр чарăнмасăр туса пырасси çинчен шутламаççĕ те.

Парти организацин секретарĕ Н. Степанов коммунистсене хушнă ĕçсем пурнăçланса пынине тĕрĕслемест. Агитациллĕ-массăллă ĕçе кунта вăхăтран вăхăта çеç туса пыраççĕ. Вĕсем начар ĕçленĕ пиркиех ĕнтĕ колхозниксем ĕçе кăнтăрла 10—11 сехетсенче тин тухаççĕ. Парторганизацин секретарĕ Степанов юлташ уйхирте питех те сахал пулать.

Аçта агитациллĕ-массăллă ĕçе йĕркеллĕ туса пыраççĕ, унта колхозниксем ырми-канми ĕçлеççĕ. Калинино районĕнчи Уйкас Юнтапари «Новая жизнь» колхозра агитациллĕ-массăллă ĕçе колхоз председателĕ коммунист Дария Угинева хăй ертсе пырать. Ку колхозра колхозниксем мĕнле ĕçлесе пынине тата ĕçе хăш вăхăтра тухнине диаграмма çинче паллă туса пыраççĕ. Кунсăр пуçне кашни бригадăрах кăтарту хăмисем пур. Çав хăмасем çинче кашни кун кам мĕнле ĕçлени питĕ лайăх курăнса тăрать.

Хăшпĕр агитаторсем ăнлантарура ĕçне «Ушкăнра, йышлă çынсем хушшинче çеç тума пулать», теме пăхаççĕ. Çак вăл пĕрре те тĕрĕс мар. Уйкас Юнтапа ялсовет исполкомĕн председателĕ Малов юлташ часчасах колхозсен уйхирĕсенче, кĕрпе тăвакан е çу кăларакан армансенче пулать. Армансенче чылай колхозсенчен килнĕ çынсем пулаççĕ. Малов юлташ вĕсемпе час-часах калаçать. Унăн аллинче тин çеç килнĕ хаçатăн номерĕ. Унта Тăван çĕршыва сутакансене айăпласа çырнă Çар Трибуналĕн приговорне пичетленĕ. Малов юлташ колхозниксене приговора вуласа пачĕ, тăшмансен тискер ĕçĕсем çинчен тĕплĕн ăнлантарчĕ. Колхозниксем ăна тимлĕн итлерĕç.

Пур çĕрте те агитаторсем лайăх ĕçлеççĕ теме çук-ха. Калинино районĕнчи Ассакассинчи «КИМ» колхозра комсомолецсем те, учительсем те пур. Апла пулин те кунта агитациллĕ-массăллă ĕç сӳнсе ларнă. М. Корнилова комсомолкăна пĕрремĕш, М. Алексеевăна — иккĕмĕш, фельдшерица С. Конновăна —виççĕмĕш, учительница А. Кудановăна — тăваттăмĕш бригадăсене «çирĕплетнĕ». Вĕсем хăйсен участокĕсенче пĕрре те пулман. Колхозниксемпе колхозницăсене Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсене, çĕршыври тата тĕнчери лару-тăру çинчен пĕлтерсе тăмаççĕ. Çавна пула колхозниксем ӳрĕк-сӳрĕк ĕçлеççĕ. С. Ямщикова колхозница кăçал колхозра пачах ĕçлемен. Унăн пĕр ĕçкунĕ те çук. Е. Антоновăпа Н. Михайлова—вăй-питти çынсем. Вĕсен мĕнпурĕ те 28-шар ĕçкунĕ çеç. Пĕтĕм колхозсене илсен, ĕçлеме пултаракан 165 çынран 53-шĕ ĕçкунĕсен минимумне тултарман. Колхозра ĕç темĕн чухлех. Колхоз иртнĕ çулхи тырпулсене те çапса пуçтарса кĕртеймен-ха.

Уйри тырпулсене пуçтарса кĕртнĕ вăхăтра агитациллĕ-массăллă ĕçе уйрăмăшах тимлĕн туса пымалла. Мĕнпур колхозниксене вăйлă тырпула пĕр тăккаламасăр пухса кĕртме мобилизацилемелле. Агитациллĕ-массăллă ĕçĕн тулашĕнче пĕр колхозник те ан юлтăр. Кашни колхозникпа колхозница, комбайнерпа тракторист çакна асра тытса тăтăр: çак йывăр вăхăтра тăван çĕршыва хӳтĕлесе хăварассишĕн, ирсĕр тăшмана пĕтерсе тăкассишĕн мĕнпур вăя хурса кĕрешесси—унăн пирвайхи тивĕçлĕхĕ. Тырпулсене ăнăçлăн пухса кĕртессишĕн çине тăрса кĕрешни вăл—орденлă республикăн чысне малалла та çӳлте тытассишĕн, кăçал республикăна малти вырăна кăларассишĕн кĕрешни пулать.

С. ШАДИН.

(«Чăваш Коммуни» корр.).

Вырăнти предприятисем валли вутă хатĕрлес ĕçе организованно тытăнмалла

ЕТĔРНЕ. (Телефонпа). Районăн кăçалхи çул вырăнти предприятисемпе учрежденисем валли 35 пин кубометр вутă хатĕрлесе турттармалла. Вăл шутран июлĕн 25-мĕшĕ тĕлне 17 пин кубометр хатĕрленĕ. Лесхоз тата «Красный Яр» артель вутă хатĕрлес плана ытлашшипех пурнăçларĕç. Лесхозăн 2500 кубометр вутă хатĕрлемелле пулнă пулсан, вăл 5306 кубометр хатĕрленĕ.

Анчах та районри хăшпĕр предприятисемпе учрежденисем ку ĕçе кирлĕ пек тытăнман-ха. Спиртзаводăн (директорĕ Калеткин) 15 пин кубометр вутă хатĕрлесе турттармалла, паянхи куна вăл 4518 кубометр çеç хатĕрленĕ. Ку ĕçе Заготзерно коллективĕ те тытăнмапа пĕрех. Унăн план тăрăх 700 кубометр хатĕрлемелле пулсан, ку таранччен 50 кубометра яхăн çеç хатĕрленĕ.

Районри предприятисемпе учрежденисен хĕле вутă хатĕрлес ĕçе организованно тытăнмалла. Предприяти руководителĕсен çак ответлă ĕç çине тимлĕн çавăрăнса пăхмалла.

М. ХРАМОВ.

ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Комсомолецсем вăрман ĕçĕнче

СĔНТЕР. (Телефонпа). Пушкăрт ялсоветĕнчи «Новый путь» колхозăн планпа 120 кубометр вутă касса, 93 кубометр турттармалла пулнă. Паянхи куна 109 кубометр касса 200 кубометр турттарнă.

Ку ĕçе пуçламĕш парторганизацин секретарĕ Кириллов юлташ хăй ертсе пырать. Вăл организацилене вăрманта кулленех 38 çын çӳрен, 15 çын лашапа ĕçлерĕç. Ирина Лукьяновăпа Андрей Бронюшкин комсомолецсем кулленхи нормăна 300 процентшар тултарса ĕçлерĕç. Вĕсем кунне 1 кубометр хатĕрлес вырăнне 3-шер кубометр хатĕрлерĕç. Çавăн пекех А. Артемьева, З. Тихонова, Ф. Петрова çамрăк хĕрсем те вутă турттарнă çĕрте кулленхи нормăна 125-шер процент тултарса пычĕç.

М. КАРПОВ.

Апакасси шкулĕ вĕренӳ çулĕ умĕн

ÇĔРПУ. Ку шкул иртнĕ вĕренӳ çулне аван вĕçлерĕ. Ун хыççăнах çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленме тытăнчĕ.

— Чи малтанах эпир вутă хатĕрлес ĕçе пуçăнтăмăр. Паянхи кун тĕлне нумай ĕçсем турăмăр ĕнтĕ, — тет шкул директорĕ А. Иванова юлташ.

Шкул хăйĕн коллективĕпе 70 кубометр вутă хатĕрлесе турттарнă. Ку вăл хĕл каçма çителĕклĕ. Классене юсама тытăннă, 4 пӳлĕме хаçатсем çыпăçтарнă, тăмпа шуратнă.

Халĕ классем таса, кăмакасем шурă. Ку ĕçсенче директорсăр пуçне Ф. Ксенофонтов учительпе С. Димитриева учительница активлăн хутшăнса ĕçленине палăртса хăвармалла.

Анчах шкулăн пĕр пысăк çитменлĕхе пĕтермелле. Ку вăл—учительсен коллективĕ пирки. Шкул директорĕ: пире 3 учитель кирлĕ, Чăваш АССР Çутĕç Халăх Комиссариачĕ ярасса шанатпăр-ха,—тесе ларать.

Ку ыйту пирки районри çутĕç пайĕпе калаçсан, унта шкул директорĕ Иванова юлташ 2 учителе, хăйне килĕшмен пирки, урăх çĕре куçарма ыйтать, вĕсем вырăнне урăххисене илесшĕн, терĕç. Çапла вара ку шкула 3 учитель мар, пĕрре çеç кирлĕ пулать. Иванова юлташăн ун пек шухăшсене пĕтермелле.

И. М.

Тăрăшса ĕçлет

КУСЛАВККА. Никифор Зайцев темиçе çул хушши ĕнтĕ Паланкассинче пушар дружинин начальникĕ пулса ĕçлет. Вăл, ватă пулин те, хăйне шанса панă ĕçе яланах тимлĕн туса пырать. Кăçал вăл пурăнакан пӳртсен кăмакисене темиçе хут та тĕрĕсленĕ. Кашни вунă кунрах пӳрт умĕнче каткапа е пичкепе шыв ларнине тĕрĕслесе тухать. Вăл тăрăшнипе икĕ пĕве пĕвеленĕ. Колхоз амбарĕсем патĕнче, ял варринчи пушар сарайĕнче яланах кӳлме хатĕр тăракан урапасем çинче пичкепе шыв ларать. Итеме çӳп-çапсенчен тасатса çитернĕ хыççăн пĕр метр сарлакĕш сухаласа çавăрăннă. Унта табак туртмалли вырăн тунă, пичкепе шыв лартнă. Урамра, итем çинче, амбарсем патĕнче яланах хурал тăраççĕ. Вĕсене Зайцев юлташ çĕр çывăрмасăр тĕрĕслесе тăрать.

М. ИЛЬИН.

Тумтирсене начар çĕлеççĕ

ШĂХАСАН. Шуркассинчи «8 съезд Советов» ятлă çĕвĕ çĕлекен артель заказсене тивĕçлипе пурнăçламасть. Кунта пĕр-пĕр япала çĕлеме парсассăн, мĕнле май килнĕ, çавăн пек çĕлеççĕ. Закройщик Т. Викторов час-часах заказсене пăсса касать. Артель правленийĕ ĕççыннисен заказĕсене пысăк пахалăхпа пурнăçлассишĕн тăрăшмасть.

Л. НИКОЛАЕВ.

Ют çĕршывсенче

Германин броньăллă тискер кайăкĕ Хĕрлĕ Çарпа çапăçса хăйĕн шăлĕсене хуçса пĕтерет

Хĕрлĕ Çар Орелпа Белгорода илни çинчен США-ра мĕн çыраççĕ

НЬЮ-ЙОРК, августăн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Совет войскисем Орелпа Белгорода йышăнса илни çинчен калакан пĕлтерӳсене Америкăри хаçатсем чи курăнмалли вырăнсенче пичетленĕ. Хаçатсемпе радио çакна палăртаççĕ: çав хуласене йышăнса илни гитлеровецсене питĕ вăйлăн пырса çапни пулать, вăл вĕсен вăйне нумай хавшатать.

«Вашингтон пост» хаçат хăйĕн умстатьинче çапла калать: нимĕçсем Орела çухатни вăл вырăс çарĕ хăватлă пулнине пĕлтерет, тет.

Вăрçă ĕçĕсем çинчен çырса тăракан Вернер «П. М.» хаçатăн сотрудникĕпе калаçнă чухне çапла каланă: Орелпа Белгород патĕнче çĕнтерни питĕ паха ĕç пулса тăрать, мĕншĕн тесен вăл çĕнтерĕве Совет Союзĕпе Германи фрончĕн чи паха участокĕнче тунă.

Нью-Йоркра тухакан «Сэнс» хаçат çапла çырать: «Фактсем Сталинăн чаплă приказне пĕтĕмпех тӳрре кăлараççĕ. Вырăссем Орелпа Белгород патĕнче çĕнтерни Германин стратегиллĕ позицийĕсене пырса çапни пулать», тет.

Çакна аса илес пулать, тет Нью-Йоркри радион обозревателĕ: пĕр уйăх каялла нимĕçсем, питĕ йышлă вăй пухса тăратса, Хĕвелтухăç фронтĕнче наступлени пуçласа ячĕç. Анчах халь те чылай вăйлă пулса тăракан тата хаяр тискер кайăкăн наркăмăшлă нумай шăлне персе хуçнă ĕнтĕ. Германин броньăллă тискер кайăкĕн çав шăлĕсене Хĕрлĕ Çар пере-пере хуçать.

ВАШИНГТОН, августăн 6-мĕшĕ. (ТАСС). США-н çар министрĕ Стимсон пичет представителĕсемпе калаçнă чухне çапла каланă: совет войскисем Орела йышăнса илни вăл нимĕçсем пысăк поражени тӳснине пĕлтерет, тенĕ.

„Орел патĕнче çĕнтерни гитлеризм тупăкне çапса лартмалли тепĕр пăта пулса тăрать"

Хĕрлĕ Çарăн çитĕнĕвĕсем çинчен Англи пичечĕ мĕн çырать

ЛОНДОН, августăн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Гитлеровецсене Орелпа Белгородран хăваласа кăларнă Хĕрлĕ Çарăн пысăк çитĕнĕвĕ çинчен Англири хаçатсемпе радио халь те нумай çыраççĕ, нумай калаçаççĕ.

Орела, ун хыççăн тата Белгорода йышăнса илни вăл çак вăрçăра союзниксен пĕр-пĕр армийĕ тунă чи пысăк, чи хăюллă тата чи хăвăрт сарăлса пыракан наступлени пулса тăрать, тет «Дейли экспресс» хаçат. Нимĕç халăхне вăл Сталинградри çапăçу пекех хытă хуйхăртĕ. «Российăри çĕнтерӳсем,—тесе çырать хаçат,—Вăтаçĕр тинĕсре паллă майсем туса пачĕç. Германин пĕр вунă дивизийĕ Муссолинине власра тытса тăма пултарнă пулĕччĕ, анчах та Гитлер Российăран çавăн пек сахал войскă та илсе тухма пултараймарĕ».

«Орел патĕнче çĕнтерни,—тесе çырать «Дейли Скэтч» хаçатăн обозревателĕ,—вăл гитлеризм тупăкне çапса лартмалли тепĕр пăта пулса тăрать».

Лондонри радио черетлĕ калаçура çапла каланă: паян эпир пирĕн вырăс юлташсене каллех салам яма пултаратпăр. 1941 çулта эпир вĕсене Ленинградпа Мускава паттăррăн хӳтĕленĕшĕн саламларăмăр; 1942 çулта—Сталинград патĕнче чаплă çĕнтерӳ тунăшăн саламларăмăр. Халĕ нимĕçсем Хĕрлĕ Çарăн хастарлăхĕпе чăтăмлăхне тепĕр хут туйса илчĕç. Орелпа Белгород патĕнче тӳснĕ поражени пек поражение нимĕçсем 1918 çулта та тӳсмен. Хĕрлĕ Çар нимĕçсене вăйлăн пырса çапса хăйĕн хастарлăхĕпе ăсталăхне кăтартнине малашнехи ăрусем асра тытĕç.

Нимĕçсен Норвегири войскисем арканса пыни тата вĕсен дисциплини пĕтсе пыни

ЛОНДОН, августăн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Норвегин Информаци Бюровĕ çапла пĕлтерет: Норвегин Лондонри çыннисем илнĕ хыпарсем тăрăх, нимĕçсен Норвегири оккупаци çарĕнче пуринчен ытла 16 çулхи çамрăксемпе 40—50 çула çитнĕ ватă салтаксем тăраççĕ, вĕсем е аманнă-скерсем е ӳт-пӳ тĕлĕшĕнчен кăлтăкăскерсем.

Çав хыпарсем тăрăхах, нимĕçсен Норвегири чăсĕсем ĕçкĕ ăшне путнă, пăсăлса пĕтнĕ. Чăссенче дисциплина пĕтсе пырать. Салтаксем уççăнах бунтсем те кăларса яраççĕ. Халĕ нимĕçсен Норвегире тăракан подводнăй лодкисен экипажĕсем туса иртернĕ бунтсем çинчен тĕплĕнтерех пĕлтернĕ. Тронхеймсфьордра тăракан çав лодкăсенчен пĕрне хăйĕн командиех путарнă. Çурçĕр Норвеги портĕнчен тухнă подводнăй лодкăсене хăйсен командисем юриех сиенленĕ. Вара çавăн пирки вăл лодкăсен порта каялла таврăнмалла пулнă. Ставангерта темиçе подводнăй лодкăн командисем командирсем тинĕсе тухма панă приказсене итлеме килĕшмен. Çав бунтсене пуçласа яракансене нумайĕшне тата лодкăсене сиенленĕ матроссене вĕлернĕ.

Италири лару-тăру

Бадольо правительстви Италире пĕтĕм çĕршывĕпех осаднăй положени туса хунă

ЖЕНЕВА, августăн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Италири Стефани агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Римра декрет пичетлесе кăларнă. Çав декретра Итариле пĕтĕм çĕршывĕпех осаднăй положени туса хуни çинчен каланă. Декрет августăн 8-мĕшĕнчен пуçласа пурнăçа кĕрет.

ЛОНДОН, августăн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио Швеци хаçачĕсен хыпарĕсем тăрăх çапла пĕлтерет: Çурçĕр Италире, Бадольо правительствине хирĕçлесе, çаплах демонстрацисем пула-пула иртеççĕ.

Сицилири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, августăн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Çурçĕр Африкăри вăйĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: Англипе Америка войскисем Мессинăна çитесси 50 мильăна яхăн юлнă. Мессина проливĕнче тăшманăн баржисене нумай путарнă.

Штабăн тепĕр пĕлтерĕвĕнче çапла каланă: Америка войскисем августăн 6-мĕшĕнче хаяр çапăçусем хыççăн Троина хулине йышăнса илнĕ.

Августăн 5-мĕшĕнче Америка чăсĕсем Устика утравне йышăнса илнĕ. Ку утрав Палермăран 40 миля çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре ларать.

Англин информаци министерстви çапла пĕлтерет: Англи войскисем паян Бельпассо районне çитнĕ. Бельпассо районĕ Этна тăвĕн кăнтăренче выртать, Патернăран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре.

Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Сицилире союзниксем йышăннă аэродромсем çинче 800 самолет ытла тытса илнĕ.

Союзниксен авиацийĕ Сицилипе Италие тапанни

ЛОНДОН, августăн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Çурçĕр Африкăри вăйĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: союзниксен Çурçĕр Африкăри аэродромсенче тăракан сывлăш-çар вăйĕсем ĕнер кунĕпех Сицилин çурçĕр-хĕвелтухăç пайĕнчи объектсене вăйлăн пыра-пыра тапăннă. Мессина çулйĕрĕсене, çавăн пекех тата çулсен узелĕсене атакăланă.

Августăн 7-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле союзниксен бомбардировщикĕсем Неаполь çулĕсемпе чугунçул объекчĕсене атакăланă, çавăн пекех тата тăшманăн Мессинăри войскисемпе суднисене пыра-пыра тапăннă. Союзниксен авиацийĕн 8 самолет пĕтнĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ШУПАШКАРТИ ЭНЕРГЕТИКА ТЕХНИКУМĔ

1943—44-мĕш вĕренӳ çулĕ умĕн 1-мĕш курса вĕренекенсем илесси çинчен пĕлтерет. Дизель, электричество тата строительство отделенийĕсене илеççĕ.

Техникумра 3 çул та 4 уйăх вĕренмелле.

Техникума туллимар вăтам шкултан вĕренсе тухнă СССР гражданĕсене илеççĕ, 15 çулхи çамрăксенчен пуçласа 35 çул тултарнă çынсене çитиччен. Туллимар вăтам шкултан 1941, 1942 тата 1943 çулсенче „отлично" тата „хорошо" паллăсемпе вĕренсе тухнисене экзаменсăрах илеççĕ, ыттисене испытанипе илеççĕ. Испытанисем çак предметсемпе пулаççĕ: вырăс чĕлхи, математика, физика, СССР Конституцийĕ, географи.

Вĕренме кĕме паракан заявленипе пĕрле çак документсене памалла: а) автобиографи, б) вĕренни çинчен илнĕ свидетельство (подлинникĕ).

Заявленисене сентябрь уйăхĕн 10-мĕш числиччен илеççĕ.

Испытанисем сентябрь уйăхĕнче пулаççĕ: 15-мĕш числара пуçланаççĕ, 20-мĕш числара пĕтеççĕ.

Вĕренме октябрь уйăхĕн 1-мĕш числинче пуçлаççĕ.

Техникумра вĕренекенсем валли столовăй, общежити пур. Выртса тăма минтер-вырăнсем параççĕ.

Ыйтса пĕлмелли тата заявленисемпе документсем ямалли адрес çапла: гор. Чебоксары, ул. Калинина, 23 (3-мĕш № шкул çурчĕ.)

2—1

ЧĂВАШ АССР НАРКОМСОБЕСĔ суккăрсене массажист пулса ĕçлеме вĕрентекен курс уçать. Вăл курс Улатăрти медсестрасен шкулĕнче уçăлать.

Курса кĕрес текенсен заявленипе пĕрле çак документсене ямалла: шкултан вĕренсе тухни çинчен панă удостоверени, сывлăх çинчен калакан удостоверени тата характеристика (характеристикăна колхозран, ялсоветĕнчен, предприятиерен е учрежденирен илме юрать).

Курса туллимар вăтам шкултан вĕренсе тухнисене илеççĕ.

Курсантсене стипенди параççĕ, столовăй пур, пурăнма хваттер параççĕ.

Вĕренме хăçан пуçласси çинчен уйрăм пĕлтерӳ пулать.

Заявленипе документсене çак адреспа ямалла: гор. Чебоксары, Красная площадь, 24, Наркомсобес.

ЧĂВАШ АССР-ĕнчи МĔНПУР АВТОХУÇАЛĂХСЕН РУКОВОДИТЕЛĔСЕНЕ ПĔЛСЕ ТĂМА

Чăваш АССР Совнаркомĕн çак çулхи июлĕн 15-мĕшĕнче йышăннă 899-мĕш номерлĕ постановленийĕ тăрăх, Чăваш АССР-ĕнчи мĕнпур автохуçалăхсемшĕн пуриншĕн те çул çӳремелли пĕр формăллă лист пулать.

Август уйăхĕнчен пуçласа автомашинăсем çав пĕр формăллă çул çӳремелли лист пулсан кăна çӳреме пултараççĕ, урăх формăллă листсемпе çӳреме чарса лартнă.

Автохуçалăхсенче çав çул çӳремелли листсен бланкисене çирĕп отчетность бланкисене сыхласа хисепе илсе тăмалли положенире кăтартнă йĕрке тăрăх сыхласа хисепе илсе тăмалла.

Çул çӳремелли листсене илме автохуçалăхсен Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Автотранспорт Управленин Автотехснабне çак адреспа пымалла: гор. Чебоксары, Союзная, 4. Телефон 3—80.

ЧАССР СОВНАРКОМĔ ÇУМĔНЧИ АВТОТРАНСПОРТ УПРАВЛЕНИЙĔ.
ЧАССР НКВД УМ ГОСАВТОИНСПЕКЦИЙĔ.

ТЕХНО-ТКАЦКИ ФАБРИКА

килте ĕçлекенсене йышăнать, çитĕннĕ çынсене тата çул çитмен çамрăксене. Вĕсен каяша юлнă татăк-кĕсĕксенчен килте (хăйсен хваттерĕсенче) сыхнă япаласемпе сăран япаласем туса хатĕрлемелле.

Килте ĕçлеме йышăннисене рабочисемпе тан продовольстви карточки параççĕ, столовăйра апат çитереççĕ, промтоварнăй ларек çумне çирĕплетеççĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, поселок Волгостроя, Техно-ткацкая фабрика. Тел. 7—46.

ШУПАШКАРТИ В. Э. С. СТРОИТЕЛЬСТВИНЕ çакăн пек специалистсем кирлĕ: слесарьсем, токарьсем, электромонтерсем, кочегарсем, локомобиль машинисчĕсем, платниксем, штукатурсем, грузчиксем, табельщиксем тата строительствăпа монтаж ĕçĕнче кирлĕ ытти специалистсем.

Çав асăннă специальноçсемпе ĕçлеме вĕрентмешкĕн тата ученикĕсене йышăнаççĕ.

Рабочисене пурне те общежитине вырнаçтараççĕ тата ОРС-ăн хупă магазинĕсемпе столовăйĕсем çумне çирĕплетеççĕ.

2—1.

Кăçал июнь уйăхĕн 24-мĕш числинче лаша çухалнă. Паллисем çапла: айăр, тĕсĕ—çӳрен, çамки çинче çăлтăр, çӳллĕшĕ 133 см.

Пĕлекенсене çак адреспа пĕлтерме ыйтатпăр: Шупашкар хули, Чăваш АССР Наркомземĕн Землеустройство управленине.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР

августăн 10-мĕшĕнчен пуçласа кашни кун саслă илемлĕ

НЕУЛОВИМЫЙ ЯН

ятлă çĕнĕ фильм кăтартать.

Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ: 12, 14, 16, 18, 20 тата 22 сехетре.

Часах

ЛЕРМОНТОВ

ятлă фильм кăтартма пуçлаççĕ.

ШУПАШКАРТИ КООПЕРАЦИ ТЕХНИКУМĔ

1-МĔШ КУРСА ВĔРЕНЕКЕНСЕМ ИЛЕССИ ÇИНЧЕН ПĔЛТЕРЕТ. Çак отделенисене илеççĕ: 1) бухгалтери отделенийĕ, 2) товароведени отделенийĕ. 3) общественнăй питани отделенийĕ.

Товароведени отделенийĕнче 3 çул вĕренмелле, ытти отделенисенче—2 çул.

Техникума туллимар вăтам шкултан вĕренсе тухнă çынсене—15 çултан пуçласа 30 çула çитнисене илеççĕ.

Кĕрес текенсен заявленипе пĕрле çак документсен подлинникĕсене памалла: а) вĕренсе тухни çинчен, б) хăçан çурални çинчен, в) сывлăх çинчен, г) çар обязанноçĕ тĕлĕшпе мĕнле тăни çинчен, д) икĕ фотоӳкерчĕк.

Заявленисене сентябрь уйăхĕн 20-мĕш числиччен илеççĕ.

1941, 1942, 1943-мĕш çулсенче вăтам шкултан «отлично» тата «хорошо» паллăсемпе вĕренсе тухнисене 1-мĕш курса экзаменсăрах илеççĕ. Ыттисен çак предметсемпе экзамен тытмалла: а) СССР Конституцийĕ, б) вырăс чĕлхипе литература, в) математика, г) географи.

Экзаменсем сентябрь уйăхĕн 20—30-мĕш числисенче пулса иртеççĕ.

Вĕреннĕшĕн укça тӳлес йĕрке тата стипендисем парса тăрасси ытти техникумсенчи пекех.

Техникума вĕренме кĕнисене пурăнмашкăн общежити параççĕ, столовăй пур.

Заявленисене çак адреспа ямалла: гор. Чебоксары, Театральная, 1/5, Чувашсоюз, отдел кадров.

ĔÇ РЕЗЕРВĔСЕН УПРАВЛЕНИНЕ çак специальноçсене пĕлекенсем васкавлăн кирлĕ: главнăй бухгалтер, бухгалтер-ревизор тата экономист.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Советсен çурчĕ, 4-мĕш хут, 409-мĕш пӳлĕм. Телефон 1—66.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, парти пурнăç пайĕн—3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 760 Типография №1 Управления полиграф, промышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 Ф. 6. 53 88 п. л.